26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮНЬ
15
ЫТЛАРИКУН
123(6360) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ССР Союзĕн Наркомфинĕ пĕлтерни

Çак çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче 12 миллиард тенкĕлĕх кăларнă Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне 7 кун хушшинче 20 миллиард та 323 миллион та 32 пин тенкĕлĕх сарнă, çакă вăл заема кăларнă суммăран 8 миллиард та 323 миллион та 32 пин тенкĕлĕх иртерсе вырнаçтарнине пĕлтерет.

Заема, йышăннă суммăран чылаях иртерсе сарнă пирки, ССР Союзĕн Наркомфинĕ, ССС Совнаркомĕ кăтартса панипе, Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне çырăнса илессине 1943 çулхи июнĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа пур çĕрте те чарма хушнă.

СССР Наркомфинĕ А. ЗВЕРЕВ.

1943 çулхи июнĕн 12-мĕшĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кашни колхоз тултарса пытăр

Партипе правительство йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртсе пырса, пирĕн республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк ситĕнÿсем турĕç. Иртнĕ çулта ĕневăкăрсен хисепĕ 40 процент, сыснасен хисепĕ 29 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 74 процент ÿснĕ. 28 районран 18 районĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пĕтĕмпех пурнăçа кĕртнĕ. Кунпа пĕрлех выльăхсен тухăçлăхĕ те чылай ÿсрĕ. Çаксем вара государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене вăхăтра тултарма майсем туса пачĕç, çавна пула пĕлтĕр пирĕн республикăри колхозсем государствăна 1941 çулхинчен 58 пин пăт ытларах аш-какай пачĕç.

СССР Совнаркомĕ пирĕн колхозсен ĕçне пысăккăн хакларĕ. Чăваш республикине Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш премине пачĕ. Çак пысăк парне партипе совет тата çĕрĕç органĕсене, пĕтĕм колхозниксене татах та лайăхрах ĕçлеме хушать, 1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур районсемпе колхозсем те пурнăçа кĕртмелле тума хушать.

Чылай районсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кăçал та ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Сĕнтĕр тата Красноармейски районсем майăн 1-мĕшĕ тĕлнех выльăх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плана пур выльăхсем енĕпе те пĕтĕмпех тултарнă. Çавăн пекех Иш-лей, Вăрнар тата Элĕк районĕсем те ку тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ.

Анчах 1943 çулхи тăватă уйăх итогĕсем çакна кăтартса параççĕ: СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстермелли тата унăн тухăçлăхне хăпартмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление нумай районсем пачах та сителлĕксĕр пурнăçа кĕртсе пыраççĕ-ха. Начар пăхса усранă пирки тата тирпейсĕр усă курнă пирки чылай колхозсенче выльăх-чĕрлĕхсем вилеççĕ. 1943 çулхи январьтен пуçласа республикăра ĕнесен пĕтĕм хисепĕнчен 2,2 процент чухлĕ, сыснасем 7,6 процент чухлĕ тата сурăхсем 3,9 процент чухлĕ вилсе пĕтнĕ. Уйрăмах çамрăк выльăхсем нумай вилеççĕ. Выльăх-чĕрлĕхе сыхласа усрассишĕн колхозсен руководителĕсем тата ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем чылайăшĕ сителлĕксĕр тăрăшаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленумĕ, республикăра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе-явса, районсен руководителĕсене çак тĕлĕшпе çирĕп кăтарту парса хăварчĕ. Кунпа пĕрлех пленум çакна палăртрĕ: колхозсенче ама выльăхсене чуптарса хăварассишĕн, çапла вара — нумайрах пăрусем, путексем илессишĕн сителлĕксĕр кĕрешеççĕ. Улатăр тата Çĕмĕрле районĕсенчи колхозсем пĕлтĕр кашни 100 ĕнерен 75 пăру кăна илнĕ. Шăмăршă районĕнче вара 65 пăру çеç илнĕ.

Хăшпĕр районсенче пĕлтĕрхи йăнăша тепĕр хут тăваççĕ, выльăх ĕрчетес плана тултарман пулин те çамрăк выльăхсене контрактациллес тата сутăн илес ĕçе вăраха яраççĕ. Йĕпреç, Комсомольски, Кувакино, Чкаловски, Шăмăршă тата Тăвай районĕсенче колхозниксен çамрăк выльăхĕсене контрактациллес тата сутăн илес ĕçе халĕ те пуçăнман-ха. Выльăх ĕрчетмелли плана тултарас тесен, çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăварма тата сутăн илес ĕçе анлăн туса пыма кирлине çак районсен руководителĕсем ăнланмаççĕ пулмалла.

Республикăри колхозсенче нумайĕшĕнче ăратлă выльăхсене пăхса усрас ĕçе ямăхтарса янă, тухăçлăрах выльăхсене палăртса суйласа илес ĕçе туса пымаççĕ. Çавна пула ăратлă выльăхсен кĕнекине республикăра 285 ĕне, 115 сысна тата 277 сурăх çеç çырса хунă. Советски, Сĕнтĕр, Красноармейски, Вăрмар, Шăхасан тата ытти районсенче ăратлă выльăхсен кĕнекине пĕр ĕне те кĕртмен.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ республикăра выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ сителлĕксĕр пулнине уйрăмăнах палăртса хăварчĕ. Районсен руководителĕсемпе колхозсен правленийĕсем выльăх-чĕрлĕх пахалăхне тата тухăçлăхне çĕклесси çине çавăрăнса пăхмаççĕ. Çавăнпа та чылай колхозсенче выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш ÿссе пымасть.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксен ĕçне организацилессипе юлашки вăхăтра сителлĕксĕр çавăрăнса пăхни палăрать. Чылай колхозсенче выльăх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксене ĕç нормисемпе заданисем паман, ĕçшĕн кун тăрăх тÿлессине тата обезличкăна халĕ те пĕтермен, выльăх-чĕрлĕх продукцине начар шута илсе пыраççĕ. Фермăсенчи работниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яман.

Выльăх апачĕ сителлĕксĕррине пула нумай колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç начар пурнăçа кĕрсе пырать. Апла пулин те Наркомзем, райисполкомсемпе парти райкомĕсем сителлĕклĕ апат хатĕрлес тĕлĕшпе, выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хурас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ, выльăх апатне каякан курăксемпе тымар-çимĕçсем акас плана çулсерен пурнăçа кĕртеймеççĕ, улăх-çарансене лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Колхозсемпе совхозсенче лашасен йышне ÿстермелли, вĕсене пăхса усрас ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановленире кăтартнă ситменлĕхсем Чăваш республикинче те пур. Начар пăхса усранине пула, лашасемпе усă курас ĕçре обезличка пулнă пирки тата лашасене начар тăрантарнине пула Кувакино районĕнчи колхозсенче кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 139 лаша, Шăмăршă районĕнче 119, Пăрачкав районĕнче 157 лаша вилнĕ. Нумай колхозсенче тихасем вилеççĕ, çав вăхăтрах кĕсресене пурне те чуптармаççĕ. Çакна пула Йĕпреç, Комсомольски, Первомайски районĕсенче пĕлтĕр кашни 100 кĕсререн пĕтĕмпе те 18 тиха çеç илнĕ.

Хăшпĕр райисполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана тултарассишĕн тивĕçлипе кĕрешменнине ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ уйрăмăнах палăртса хăварнă. Кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне аш-какай памалли плана республика 40,9 процент, сĕт памалли плана 21,4 процент, çăмарта памалли плана 19,6 процент тата çăм памалли плана 19 процент çеç тултарнă.

ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленумĕ парти райкомĕсемпе райисполкомсене сÿлте асăннă ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ. Кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кашни колхозах пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать, выльăхсене пурне те сыхласа хăварас тесе, вĕсене лайăх пăхса усрассишĕн тата вĕсемпе тирпейлĕн усă курассишĕн кĕрешес ĕçе вăйлатас пулать.

Выльăхсем валли ăшă витесем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлеме колхозсенче витесене юсакан е çĕнĕрен лартакан бригадăсем организацилемелле, выльăх витисене сителлĕклех хатĕрлесе хумалла. Çак ĕçсене ытарпул пуçласа кĕме тытăничченех пĕтĕмпех туса пĕтермелле.

Выльăхсене валли сителлĕклĕ апат хатĕрлесе хăвармалла. Çавăнпа та кашни колхозрах утă çулас ĕçе вăхăтра туса ирттермелле, силос хывмалли плана пĕтĕмĕшпех тултармалла, выльăх апачĕн базине ÿстермелли ытти майсемпе те анлăн усă курмалла.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешĕве вăйлатмалла, лашасем ĕрчетес плана тултарассишĕн тимлĕн кĕрешмелле, чăх-чĕп ĕрчетес ĕçе хакламаннине пĕтермелле, выльăх-чĕрлĕхсене чир-чĕртен лайăх сыхласа усрамалла, фермăсен работникĕсене ĕçшĕн хушса тÿлес майпа выльăх-чĕрлĕх продукцине шута илсе пырассине йĕркелесе ямалла, колхоз фермисенче малта пыракансен опытне тата социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла, ама выльăхсене пурне те чуптарса хăварма тăрăшмалла, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен кадрĕсене вĕрентсе ÿстерсе пымалла.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пуçламĕш парторганизацисемпе комсомол организацисем ертсе пыма тивĕç. Уйрăмах комсомол организацисен обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес тĕлĕшпе куллĕн интересленмелле, колхоз фермисенчи работниксене ялавах пулăшса тăмалла, пĕр сăмахпа каласан, колхозсенчи комсомол организацисен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе шефа илсе ăна вăйлăн малалла ямалла тăрăшмалла.

Парти Обкомĕн пленумĕ лартнă задачăсене пурнăçа кĕртесси — вырăнсенчи партипе совет тата комсомол организацисен çывăх вăхăтри чи пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе фронт ыйтнă пек туса пырар, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр аллăмăрах ярар мар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июнĕн 12-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июнĕн 11-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче 5 нимĕç танкĕнчен кая мар, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 60 автомашинăна çитти тата 6 автоцистернăна пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассемпе горючий темиçе складне сирпĕнтернĕ е çунтарса янă. 3 чугунçул эшелонне çĕмĕрнĕ, артиллерипе минометсен 13 батарейине пусарса лартнă, тăшманăн хăй тĕллĕн çÿрекен пĕр баржине путарнă, виççĕшне сиенленĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чăçсем 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çитти пĕтерсе тăкнă, 10 пулемет çĕмĕрнĕ, тăшманăн 7 блиндажĕпе 2 дзотне ишĕлтерсе антарнă. Пĕр участокра пĕр чăçăн разведчикĕсем тăшман оборони ăшне кĕрсе кайнă та штык вĕççĕн пуçлакса кайнă тытăçура 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнĕ хыççăн пирĕн боецсем хăйсен чăçне таврăннă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче 9 нимĕç самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехри пĕр участокра тăшман пехотин икĕ батальонĕ умлă-хыçлă темиçе атака тунă. Совет боецĕсем тĕл персе тата хирĕç пыра-пыра çапса, нимĕçсене хăйсен малтанхи позицийĕсем çине ывăтса янă. Çапăçу хирĕнче тăшман виллисем нумай выртса юлнă. Пирĕн артиллеристсем персе нимĕçсен 2 танкне çунтарса янă. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксем тăшманăн 2 дзотне тата боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Лисичанск районĕнче нимĕçсем пирĕн оборонăн малти хĕррине çапăçса пĕлме хăтланнă. Пĕр чăçăн боецĕсем, пулеметсемпе персе, тăшмана хăйĕн малтанхи позицийĕсем çине чактарнă. Пирĕн подразделенисем пеннипе темиçе вуншар нимĕç салтакĕ вилнĕ. Тепĕр участокра тăшман, тĕтĕм чаршавĕпе усă курса, Çурçĕр Донец шывĕ урлă каçма хăтланнă. Пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, гитлеровецсен пысăк пайне вĕлерсе тăкнă е шыва путарнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем тăшманăн 150 салтакĕпе офицерне çитти вĕлерсе тăкнă, вăл шутран 80 гитлеровеца снайперсем вĕлернĕ. Артиллеристсемпе минометчиксем пеннипе тăшманăн 15 дзочĕпе 11 землянкине ишĕлтерсе антарнă е сиенленĕ. 5 пулемет, 2 миномет тата 11 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ровно облаçĕнче кĕрешекен партизансен Котовский ячĕпе тăракан отрячĕ чугунçул линийĕ тăрăх минăсем хурса тухнă. Çав минăсем çине пырса кĕрсе, нимĕçсен çар эшелонĕ сирпĕнсе кайнă. Крушенире тăшман салтакĕсем ларса пынă 3 класлăй вагон тата çăмăл автомашинăсем тиенĕ 3 платформа ванса кайнă. Партизансен тепĕр ушкăнĕ тăшман поездне ÿпĕнтерсе янă. Унта автомашинăсем тиенĕ 5 платформа тата тĕрлĕрен çар пурлăхĕ тиенĕ 12 вагон пĕтнĕ.

* * *

Аяларахра нимĕçсен 6-мĕш авиапехотнăй дивизийĕн 15-мĕш ротинче тăнă обер-ефрейторăн Детерингăн майăн 25-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче вĕлернĕскерĕн, дневникĕнчен çырса илнĕ татăксене пичетлетпĕр:

«1943 çулхи **февралĕн 12-мĕшĕ**. Сталинград патĕнче 6-мĕш армие пĕтерсе тăкнă. Великие Луки хулине пирĕнтен туртса илнĕ. Дон çинче, Кавказра тата Кăнтăр фрончĕн ытти участокĕсенче те нимĕç войскисем оборонăра тăрса юнлăн çапăçаççĕ. Америка войскисем Çурçĕр Африкăна çитсе аннă.

Апрелĕн 19-мĕшĕ. Ку вăрçă пирĕнтен питех те пысăк жертвăсем илчĕ ĕнтĕ. Чи лайăх танковăй тата пехотнăй дивизисемпе авиаци чаçĕсем, чи лайăх летчиксемпе офицерсем вилсе пĕтрĕç. Пирĕн малашне те çавăн пек çухатусемех тÿсмелле пулсан, Германия часах 1918-мĕш çулхинчи пек лару-тăрăва кĕрсе ÿкет. Чире перекенсемпе хăравçăсем йышлăлансах пыраççĕ. Малтанхи çĕнтерÿсем пирки пулнă хаваслăх майĕпен пĕтсе пырать, нимĕн тăвас килми пулса тăрать.

Майăн 10-мĕшĕ. Ăçта-ха вăл çуркуннепе çав тери кĕске çу кунĕсем валли хатĕрленĕ оперативнăй тата тактикăллă плансем? Кирек мĕн пултăр, анчах та виççĕмĕш хĕле Российăра вăрçса ирттермелле ан пултăрччĕ. Пирĕн пурте вилĕм шăтăкĕ умне çитсе тăнă».

* * *

Франци халăхĕ нимĕç оккупанчĕсемпе кĕрешес ĕçе вăйлăлатсах пырать. Нумаях пулмасть Париж сывăхĕнче железнодорожниксем нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Вагон ванчăкĕсем айне пулса, 30 гитлеровец вилнĕ тата 100 нимĕç салтакĕ ытла йывăр аманнă. Сен-Клодра ирĕклĕ стрелоксем гитлеровецсен хурал суртне вут тивертнĕ. Амьен—Абвиль участокĕнчи чугунçул çинче патриотсем юлашки вăхăтра 33 паровоза юрăхсăра кăларнă. Парижра пĕр çамрăк француз хĕрарăмĕ нимĕç оккупанчĕсем пурăнакан гостиницăна бомба пăрахнă. Темиçе нимĕç офицерĕпе чиновникĕ вилнĕ е аманнă.

Июнĕн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июнĕн 13-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Пирĕн авиаци Баренц тинĕсĕнче нимĕç транспортне тата хуралта çÿрекен икĕ катерне путарнă, Хура тинĕсре тăшман транспортне путарнă.

Иртнĕ эрнере, июнĕн 6-мĕшĕпе 12-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, тăшман аэродромĕсем çинче тата зенитнăй артиллери пеннипе, нимĕçсен 498 самолетне пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне, совет авиацин пысăк вăйĕсем июнĕн 8-мĕшĕ, 10-мĕшĕ тата 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшман аэродромĕсене тапăннине пула унăн самолечĕсене нумай пĕтернĕ. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 153 самолет пĕтнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çитти вĕлернĕ, артиллерипе минометсен 4 батарейине пусарнă. Пĕр участокра пĕр чăçăн разведка тăвакан отрячĕ нимĕç траншейисене атакăланă, штык вĕççĕн пынă çапăçура гитлеровецсен пĕр групине пĕтерсе тăкнă. Пулемет, винтовкăсемпе автоматсем тытса илсе, разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехри пĕр участокра тăшман темиçе хутчен пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Пирĕн подразделенисем пулеметсемпе минометсенчен вăйлăн персе тăнине пула гитлеровецсен кашни хутĕнчех васкаса каялла чакмалла пулнă, çапăçу хирĕнче вĕсен салтакĕсен виллисем нумай вырта-вырта юлнă. Тепĕр участокра тăшман, атака туса, пирĕн малти подразделенине пăртак хĕсме пултарнă. Пĕр чаçăн боецĕсем, хирĕç пырса çапса, нимĕçсене ывăтса янă та малтанхи вырăна йышăнса илнĕ.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра пирĕн артиллеристсем нимĕç орудине, 6 пулемет пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине пусарнă тата гитлеровецсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тăшман Çурçĕр Донец шывĕ урлă каçма хăтланнă, анчах пирĕн подразделенисем ăна çапăласа янă. Нимĕçсен темиçе вуншар салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

Нимĕçсен 8 бомбардировщикĕ 9 истребитель хÿттипе пирĕн пĕр аэродром çине бомбăсем пăрахма хăтланнă. Пирĕн истребительнăй авиаци тăшман самолечĕсене аэродром патне яман. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 самолетне персе ÿкернĕ. Тăшманăн ытти самолечĕсем бомбăсем тĕллĕн-паллисĕр пăрахнă та хăвăрт каялла вĕçсе кайнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем нимĕçсен 11 пулеметне пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтернĕ, 13 дзотпа 10 землянкăна тата тăшманăн 4 наблюдательнăй пунктне аркатса тăкнă. Тăшманăн 120 салтакĕпе офицерне çитти вĕлерсе тăкнă.

Ленинград сывăхĕнчи сывлăшри çапăçусенче пĕр авиачаçăн летчикĕсем нимĕçсен пĕр самолетне персе ÿкернĕ тата 3 самолетне персе сиенленĕ. Кунсăр пуçне, нимĕçсен пĕр самолетне зенитнăй артиллери персе ÿкернĕ.

* * *

Гомель облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр эрне каярах нимĕç оккупанчĕсемпе Сож шывĕ çинче çапăçнă. Партизансем гитлеровецсене турттарса пыракан пароходпа тата тĕрлĕ çар грузĕсем турттарса пыракан 2 баржăна путарнă. Гомель партизанĕсен Чапаев ячĕпе тăракан отрячĕн пĕр групи нимĕçсен 3 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă, 3 самолетне çĕмĕрнĕ. Çăмăл танксем турттарса пыракан 28 платформăна, автомашинăсем турттарса пыракан 14 платформăна тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 9 вагона пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 206-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 580-мĕш полкăн 7-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Франц Фишер çапла каласа панă: «Фронтра эпĕ кăçалхи февраль уйăхĕнчен пуçласа пурăнатăп. Ротăра эпĕ темиçе уйăх маларах Францирен килнĕ салтаксенчен пĕрне те кураймарăм. Салтаксенчен нумайăшне хĕллехи çапăçусенче вĕлернĕ е амантнă. Тăрса юлнă пĕчĕк ушкăна ытти подразделенисем тăрăх валеçсе пĕтернĕ. Полкра пĕр эрне пурăннă хыççăн эпĕ «ветерансене» тĕл пултăм, вĕсем мана 306-мĕш дивизие аркатса тăкни çинчен тискер япаласем каласа пачĕç. Морозовская патĕнче кăна дивизин личнăй составĕнчен виçĕ пайран икĕ пайĕ пĕтнĕ. Февральтен пуçласа офицерсем салтаксене кашни кунах çуркунне нимĕç çарĕ наступление куçать, тесе калатчĕç. Çавăн пек лăпăртатнă пулин те, фронтра халĕ те лăпкă-ха. Ватă салтаксем пурте çапла калаççĕ: «Вырăс—çав тери хăрушă тăшман, ăна çĕнтерме май çук. Виççĕмĕш хĕл эпир Российăра юлас пулсан, Германин парăнмаллах пулать, эпир вара пурте пĕтетпĕр», теççĕ».

* * *

Польша патриочĕсем Зволен хулинчи тĕрмене хăюллăн пырса тапăннă. Партизансем тĕрмере ĕçлекенсене вĕлерсе пĕтернĕ те тĕрмере ларакан поляксене ирĕке кăларнă. Радом уездĕнчи Гнешов районĕнче партизансем ирĕксĕр анса ларнă нимĕç самолетне çунтарса янă. Янов уездĕнче патриотсем нимĕç генералне Вильгельм Либертауна вĕлернĕ. Варшавăра гестапон 3 чиновникне вĕлернĕ.

Пирĕн авиацин пысăк вăйĕсем тăшман аэродромĕсене тапăнни

Июнĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиацин пысăк вăйĕсем тăшман аэродромĕсене çĕнĕрен хăватлăн пырса çапнă. Нимĕçсен аэродромĕсенчи самолетсем çине, ангарсем çине, горючипе боеприпассен склачĕсем çине, çавăн пекех тата аэродромсен вĕçсе хăпармалли хирĕсем çине 600 тонна ытла фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем пăрахнă. Бомбардировкăна пула тăшман самолечĕсене нумай пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Пирĕн летчиксем 100 пушар ытла тухнине палăртнă, çав пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Пирĕн 2 самолет хăйсен базине таврăнман.

ПИРĔН АВИАЦИ ГОМЕЛЬПЕ БРЯНСК ЧУГУНÇУЛ УЗЕЛĔСЕНЕ ТАТА КАРАЧЕВ СТАНЦИНЕ ТАПĂННИ

Июнĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиацин пысăк вăйĕсем Гомельпе Брянск чугунçул узелĕсене тата Карачев станцине тапăннă. Тăшманăн эшелонĕсем пĕр тĕле капланса тăнă вырăнсем çине тата боеприпассен склачĕсем çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă. Пирĕн летчиксем 100 пушар ытла тухнине курнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Пирĕн 2 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Унăн Превосходительствине В. М. Молотова, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне

Мускав

Агрессие хирĕç пыракан вăрçăра пĕр-пĕрне пулăшмалли принципсем тĕлĕшпе Совет Союзĕн Правительствипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительстви килĕшÿ туса аллă пусни çулталăк тултарнă май Эсир кăмăл туса янă послание эпĕ пысăка хурса хаклатăп. Пирĕн пĕрлехи тăшмана пуçĕпех çĕнтерес ĕçре асăннă килĕшÿ çав тери паллă вырăн йышăнса тăрать тенине эпĕ те пĕтĕмĕшпех йышăнатăп. Çав çĕнтерÿшĕн ĕнтĕ Совет Союзĕн халăхĕпе унăн хĕçпăшаллă вăйĕсем ĕмĕрлĕхе манмалла мар пысăк ĕç туçĕç тата тăваççĕ те.

Çав килĕшÿ вăл—захватчиксен вăйĕсене пĕтĕмĕшпех аркатса тăкас питех те йывăр задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре эпир яланах пĕрлĕхлĕ пулса пырассине кăтартакан паллă пулса тăрать. Çав тĕллеве пурнăçа кĕртессишĕн пĕрлешÿллĕ нацисен халăхĕсемпе хĕçпăшаллă вăйĕсем çав тери хăюллăн, хăйсене хăйсем нимĕн хĕрхенсе тăмасăр кĕретĕнех вута кĕрсе çапăçççĕ, çын правипе çын ирĕклĕшĕхĕн çавăн пек çапăçни этемлĕх ĕмĕрĕсем хушшинче урăх пулман та.

Çавăн пекех тата çакна эпĕ те Эсир шанса тăнă пекех шанса тăратăп: Сирĕн нацие пирĕн наци тата ытти пĕрлешÿллĕ нацисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси, çапăçусен хирĕнче писсе тухнăскер, пирĕн çĕнтерÿ хыççăн тата вăйлăрах çирĕпленĕ. Çĕнтерÿ пирĕн ума тухса тăракан мирлĕ строительствăн çав тери пысăк задачине пире пурсăмăра та ăнăçлăн пурнăçа кĕртме мел туса парĕ.

ХЭЛЛ.

Гвардии армипе гварди корпусне памалли Хĕрлĕ Ялавсен тĕслĕхĕсене çирĕплетни

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ йышăннă Указпа гварди армипе гварди корпусне памалли Хĕрлĕ Ялавсен тĕслĕхĕсене тата вĕсем мĕнле пулмаллине кăтартса сырнине çирĕплетнĕ.

Çавăн пекех тата гварди армипе гварди корпусне памалли Хĕрлĕ Ялавсем çинчен калакан положение çирĕплетнĕ.

131 миллион та 854 пин тенкĕлĕх сарнă

СССР Финанс Халăх Комиссарне Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне сарас ĕçе июнĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа пур çĕрте те чарма распоряжени пачĕ. Пирĕн республикăра Иккĕмĕш Военнăй Заема, июнĕн 13-мĕшĕ тĕлне шутласан, 7 кун хушшинче 131.854.000 тенкĕлĕх, бюджетпа палăртнипе танлаштарсан 141,3 процент чухлĕ сарнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 34.768.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 8.943.000 тенкĕлĕх сарса, укçи 72.792.000 тенкĕ хывнă, колхозсемпе артельсенче 15.143.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине 13.034.000 тенкĕ пухса панă. Шупашкар ĕççыннисем çĕнĕ заема 10.073.000 тенкĕлĕх çырăннă.

Районсем пурте çĕнĕ заема бюджетпа палăртнинчен иртерсе сарнă.

Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне сарас ĕç республикăра ăнăçлăн вĕçленчĕ. Ĕççыннисем заема пурте пĕр çын пек çырăнса, ирсĕр тăшмана пĕтерсе тăкассишĕн нимĕн те шеллеменнине, тăван çĕршыва, Ленин-Сталин партине чĕререн юратнине кăтартса пачĕç.

Заема сарнă вăхăтрах подписка укçине пухасси анлăн саралса кайрĕ. Ку тĕлĕшпе Калинино, Вăрмар, Куккеç, Елчĕк районĕсем малта пыраççĕ. Вĕсем колхозниксемпе единоличниксем хушшинче сарнă заем укçине 100 проценчĕпех пухса çитерчĕç.

Заем укçине пухас тĕлĕшпе малашне те тимлĕн ĕçлесси—партипе совет тата финанс органĕсен тыслă ĕçĕ пулса тăрать. Иккĕмĕш Военнăй Заема кĕске вăхăт хушшинчех ăнăçлăн сарнă пекех, укçине те кĕске вăхăтрах парса татар!

Зоотехникăпа ветеринари работникĕсен республикăри канашлăвĕ

Ĕнер Шупашкарта Советсен Çуртĕн залĕнче зоотехникăпа ветеринари работникĕсен республикăри канашлăвĕ уçăлчĕ. Канашлăва зоотехниксем, ветеринарĕ врачĕсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ертсе пыракан работниксемпе стахановецсем пĕтĕмпе 190 çын пухăннă.

Канашлăва ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Белков юлташ уçрĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен йышне ÿстермелли тата унăн тухăçлăхне хăпартмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе зоотехниксемпе ветеринарсем тата ытти работниксем умĕнче тăракан задачăсем çинчен Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташ доклад туса пачĕ.

Малов юлташ доклачĕ тăрăх прение Кухарский (Засурски лаша завочĕн директорĕ), Калинин (Ишлей райçĕрĕç пайĕн старши ветврачĕ), Лимановский (Пăрачкав районĕнчи «Передовик» колхоз фермисен заведующийĕ), Гурьев (зоотехника станцин директорĕ), Краснов (Ишлей райçĕрĕç пайĕн старши зоотехникĕ), Васильев Наркомземăн главнăй ветврачĕ), агроном Сарэ тата ытти юлташсем те тухса каларĕç.

Канашлу паян хăйĕн ĕçне малалла тăсать.

1943 çулхи çулла ачасен канăвне организацилесси çинчен

ВЦСПС Президиумĕ ачасен çуллахи канăвне организацилесси çинчен постановлени йышăннă. Профсоюзсен Центральный комитечĕсене, облаçри, фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнти комитечĕсене 1943 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа рабочисен, инженерла-техникăлла работниксен, предприятисемпе учрежденисенчи служащисен ачисем валли пионер лагерĕсем тума тата çав лагерьсене 465.000 ача яма хушнă, вăл шутран 100.000 ачана 45 кунлăха (санатори йышши лагерьсене), ыттисене—21 кунлăха ямалла.

Пионер лагерĕсем тума май килмен çĕрте клубсемпе садсем тата шкулсем çумĕнче ачасен çуллахи площадкисене тума хушнă. Вăл площадкăсене рабочисен, инженерла-техникăлла работниксен тата служащисен 200 пин ачине ямалла, вăл шутран 100 пин ачана 45 кунлăха (санатори йышши площадкăсене), ыттисене—30 кунлăха ямалла.

Пионер лагерĕсемпе ачасен çуллахи площадкисене ямалли путевкăсен 10 процентне отечественнăй вăрçă инваличĕсен ачисене тата Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсен ачисене пама хушнă. Ытти путевкăсене фабрика-завод комитечĕсемпе вырăнти комитетсен рабочисем, инженерла-техникăлла работниксем тата служащисем хушшинче вĕсем мĕн чухлĕ шалу илнине шута илсе укçалла валеçмелле. Профсоюз членĕсене ăна малтан памалла. (ТАСС).

Колхоз тырă вырма хатĕрленет

КАЛИНИНО. (Хамăр корр.). [illegible] «Сормово» колхозри махорка [illegible] звено (звеньевой Ф. Зайцева) [illegible] гектартан 20-шер центнер махорка [illegible]. Кăçал та [illegible]. Махорка участокĕ çине тислĕк [illegible] 15 гектар çурă [illegible].

Колхоз халь [illegible] тырă вырма [illegible].

[illegible] тухнă, 64 отак [illegible]. Тырра кĕрсе [illegible] пурте хатĕр [illegible]. Кĕлте çыхма [illegible] 50 гектар тырă сухалăм.

Анчах та калас пулать, чылай колхозсем ӳтă сулма тата хатĕр мар-ха. Ĵĕçлешĕсене лобогрейкăсене юсама пуçламан.

С. ШАДИН.

Сталинград облаçĕнчи ирĕке кăларнă колхозсене пулăшма

ТĂВАЙ. Иваново облаçĕнчи колхозниксен патриотизмлă пуçарăвне Тăвай районĕнчи колхозниксем тулли кăмăлпа ырласа йышăнаççĕ. Вĕсем нимĕç окупанчĕсенчен ирĕке кăларнă колхозсене [illegible] колхоз [illegible].

«Искра Ильича» колхоз членĕсем, çак чĕнĕве сӳтсе явса, нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă Сталинград облаçĕнчи пĕр колхоза тăванла пулăшу парса тăма йышăнчĕç. Колхоз икĕ ĕне, пилĕк сысна уйăрчĕ, тата хăйĕн фер[illegible] кăçал [illegible] çитерсе нумай чăх-чĕп ӳстерсе пама пулчĕ. Шефа илнĕ колхоза пама колхоз правленийĕ [illegible].

Тăрмăш [illegible] Ленин ячĕпе тăракан колхоз та [illegible] колхозниксем Сталинград облаçĕнчи пĕр колхоз валли [illegible] 5 сысна, 20 чăх параççĕ. Çавăн пекех «Сталь» колхоз та Сталинград облаçĕнчи пĕр колхоз валли икĕ ĕне, пилĕк сысна, 4 сурăх тата чылай чăх-чĕп, хур-кăвакал ӳстерет.

А. НАХОВСКИЙ.

Производствăллă практикăн итогĕсем

ЧКАЛОВСКОЕ. 1942 çулхи суркунне Патăръелĕнчи ялхуçалăх шкулĕн вĕренӳ пайĕн заведующийĕ пулмарĕ тата специалистсем çитейĕксĕр пулчĕç. Çавна пула вĕренӳ çулĕн чи хĕрӳ вăхăтĕнче — производствăллă практика вăхăтĕнче эпир вĕренекенсене çителĕклĕ пулăшу параймарăмăр. Çавăнпа иккĕмĕш курсра вĕренекенсем практикăна начар шайăпа ирттерчĕç. Пирĕн практикантсем колхозсенче агротехникăллă мероприятисене (ăрăвсем, протравливани тăвассине, сеялкăпа акассине, кок-сагыз акассине т. ыт. те) тивĕçлипе пурнăçласа пыраймарĕç.

Ирхинĕ çулхи йăнăшсене шута илсе, эпир кăçал вĕренекенсен производствăллă практикине ăнăçлăн ирттертĕмĕр. Практикăна ирттерме малтанах тимлĕн хатĕрлентĕмĕр. Практикăра пулмалли колхозсенче 15 хутчен агротехникăна вĕрентмелли занятисем туса ирттернĕ. Агротехника вĕренĕвне 726 колхозникпе колхозницăна явăçтарнă.

Практикăна каякан вĕренекенсемпе консультациллĕ занятисем ирттертĕмĕр, вĕсене программăсем тата дневник çырса пымалли формăсене патăмăр. Практика ирттерес тĕлĕшпе колхозсемпе договорсем турăмăр.

Çапла майпа пирĕн вĕренекенсем колхозсенче начар мар ĕçлерĕç. Пĕрремĕш курсри 37 вĕренекен колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене тӳрремĕнех хутшăнчĕç. Вĕсем 4 колхозра ĕçлерĕç. Вĕренекенсен отрячĕсене преподавательсем ертсе пычĕç.

Иккĕмĕш курсра вĕренекенсем агротехниксем тата агрономсен помощникĕсем пулса Елчĕк, Комсомольски тата Чкаловски районĕсенчи колхозсенче ĕçлерĕç.

Çураки вăхăтĕнче 2-мĕш курсри 33 вĕренекен практикăра 25 кун хушши пулчĕç, 38 колхоза практикăллă пулăшу пачĕç. Вĕренекенсем практикăна ăнăçлăн ирттерни çинчен çĕрĕç органĕсен руководителĕсем, колхозсен председателĕсем пĕлтерсе тăраççĕ.

Практикантсем райçĕрĕç пайĕсем колхозсене сĕннĕ агротехника мероприятийĕсене тĕрĕс пурнăçласа пычĕç. Вĕсене пурнăçланă чухне практикантсен хăшпĕр колхозсенче пысăк йывăрлăхсене çĕнтермелле пулчĕ. Кая юлнă шухăшлă руководительсене хирĕç кĕрешсе, вĕсем агротехникăллă мероприятисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пычĕç.

Шкул представителĕсем 18 колхозра пулса, практикантсене пулăшрĕç. Практикантсем чылайĕшĕ оборона культурине — кок-сагыз акас ĕçе тӳрремĕнех хăйсем ертсе пычĕç. Кунсăр пуçне вĕсем агитациллĕ-массăллă ĕçе, стена хаçачĕсем кăларас ĕçе те активлăн хутшăнчĕç. Практикантсем пурте агитаторсем пулса ĕçлерĕç, Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне ĕçсыннисене тĕплĕн ăнлантарса пачĕç. Çапла вара практикăра пулнă 33 вĕренекенрен 12-шĕ «отлично», 20-шĕ «хорошо» паллăсем илчĕç.

В. КОМИССАРОВ.
Патăръелĕнчи ялхуçалăх шкулĕн директорĕ.

Шкул участокĕнче

КӲКЕÇ. Пирĕн Платкари пуçламĕш шкула колхоз пĕр гектар çĕр уйăрса пачĕ. Çак участокра учительсем шкулта вĕренекенсемпе пĕрле кăçал çĕрулми тата пахча-çимĕç туса илеççĕ. Колхоз правленийĕ шкул участокне сухаласа, сӳрелесе партарчĕ. Ачасем пĕрле тухса, нумаях пулмасть çур гектар çĕрулми лартрĕç, йăрансем туса пахча-çимĕçсем те лартнă тата тулă акнă.

Çитес вĕренӳ çулĕнче шкулта вĕренекен ачасем валли вĕри апат пулать.

Н. Мышкин.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

АЛЛА ДИНАМИТ ТЫТСА

Иван Иванович Замыслов ефрейторăн ачалăхĕпе çамрăклăхĕ çак вырăнсенче иртнĕ. Вăл кунта шывăн кашни тукăрне, унăн сыранĕсенчи кашни тĕмескене пĕлет. Юлашки мирлĕ кушичемех вăл шыв тăрăх сулă юхтаракан пунктра техсорук пулса ĕçленĕ, йывăç юхтарнă, çав йывăçран заводра фанерсем тунă.

Иван Замыслов фронтра минер пулса ĕçлет. Хăйĕн профессине юратать. Вăл минăсем илсе разведкăна кайнă, тăшман хунă минăсене сиенсĕрлетнĕ, пралук карса тунă чăрмавсене çĕмĕрсе çул уçнă, салалсусенче пирĕн танксене çул кăтартса пынă.

Нимĕçсем Замысловăн тăван çуртне çĕмĕрсе кĕнĕ те унăн арăмĕпе ачисене хĕнесе пĕтернĕ, вĕсен тумтирĕсене туртса илнĕ, ялалисене çаратнă, ĕнине пуснă, çуртне—вут тĕртсе çунтарнă. Нимĕçсем поселока ишĕлтернĕ. Замыслов халĕ фанер завочĕн кăнтса тăракан трубисем çине инçетрен пăхса тăрать: унăн чĕри курайманлăхпа тата тăшмана тавăрас силĕпе тăвăнса çитнĕ.

Вăл нумай пулмасть ответлă боевой задани илнĕ — нимĕçсен инçетех мар вырнаçнă икĕ амбразурăллă дзотне сирпĕтмелле. Икĕ пулемет боецсен кусĕ умĕнчех дзотран кунĕн-çĕрĕн вут-хĕм сирпĕтсе тăнă. Замыслов ушкăнĕ çине командовани пысăк шанчăк хунă.

Саперсем çула тухрĕç. Кăç пуласпа вĕсем вăрмантан тухнă, халĕ ĕнтĕ малти линие çитиччен шумалла.

Çуçĕр тĕлĕнче боецсем нимĕçсен пралукĕсем тĕлне çитнĕ. Шупкасимĕс ракетăсем пĕрин хыççăн тепри йăлкăшнă, çавна май саперсем çĕр çумнерех лапчăннă. Тул çутти киличчен вĕсем тăшманăн малти линийĕнчен шуса иртнĕ. Çăра вĕтлĕхри вăрттăн дзот патне çитиччен 200 метр юлсан, Замыслов Лебедевпа Кислова калать:

— Эсир юлăр-ха, эпĕ маларах шуса кĕрем,—тет. Виççĕмĕре те хăрушлăха кĕртсе ӳкерер мар...

Замыслов каллех малалла шума пуçланă, кĕçех вăл тĕттĕмлĕхре нимĕçсене уйăрса илме пуçланă. Вĕсем дзота кĕре-кĕре тухнă. Минер часовоя асăрханă, нимĕçсен калаçăвне илтнĕ. Анчах çав кăç ăна тата шаларах кĕме май пулмарĕ.

— Мĕн тăвас? — тесе шутланă Замыслов, кун çути киле пуçласан. — Каялла пăвас-и? Анчах ыран çакăн пекех вăрттăн çитме пулĕ-ши? Юлатăп!

Ефрейтор шăтăк алтнă, ăна туратсемпе маскировка тунă, унта кĕрсе вырнаçнă та кĕтме тытăннă. Çуллахи кун çав тери вăрăм пулнă, ĕçес килнĕ, табак туртас килнĕ.

Анчах тӳсмелле пулнă.

Аранах тĕттĕмленнĕ. Ефрейтор хăйĕн убежищинчен тухнă та дзот патнелле шуса кайнă. Каллех нимĕçсем курăннă. Вĕсем блиндажа пулеметсем патне кĕнĕ, пирĕн малти лини еннелле пеме пуçланă.

Замыслов саллипех шума тăрăнмалл. Тăрукак вăл сас-чĕвĕ илтнĕ, хăйне палăртмасăр ирттерсе ярас шутпа, чарăннă. Анчах кусем хамăрăннисем пулнă. Унăн патне Лебедевпа Кислов çывхарса пынă.

— Сыва-и?

— Сывах.

— Ну, ĕçсем мĕнле?

— Паян пурпĕрех дзота сирпĕтсе яратăп.

Вăл юлташĕсене каялла шума приказ панă, хăй малалла кусна. Кĕçех вăл постсенчен улшăнакан икĕ нимĕç часовойĕ калаçнине илтнĕ. Татăклă вăхăт çитнĕ. Ефрейтор вĕтлĕхре икĕ мина тытса выртнă.

«Пуçăнма вăхăт», — шутланă Замыслов. Вăл плащ-палатка пĕркеннĕ, виçĕ спичка кăларнă, вĕсене пĕр харăс чĕртнĕ те бикфорд шнурне вут тивертнĕ. Унтан икĕ минăна плащ-палаткăпа чăрканă та нимĕç дзочĕн амбразури патне аллине тăснă. Татах секунда—ефрейтор пакета дзот бойницă ăшне хунă та хăй хăвăрт каялла шуса кайнă.

Вăл хăлхана çурмалла сасă янăраса кайиччен дзотран 30 метра уйрăлма ĕлкĕрнĕ. Дзот сывлăша сирпĕннĕ, унăн ишĕлчĕкĕ айĕнче 15 гитлеровеца ялан пĕтнĕ.

Нимĕçсем, çакна туйса илсе, орудисемпе миномётсенчен вут тăкма тытăннă. Замыслов юлташне унăн тусĕсем тăшман окопĕсенчен инçетре пулнă ĕнтĕ.

Çак паттăрла ĕçшĕн Иван Иванович Замыслова Хĕрлĕ Ялав орденне парса наградăлаççĕ. Унăн тепĕр операцирн ăнăçлăхне «За отвагу» медальпе паллă тунă.

Паттăр минер хăйĕн çунтарса янă çурчĕшĕн, хĕнесе асаплантарса пĕтернĕ хĕрĕшĕн, хăйсен ирĕкĕпе мар тăван вырăнсенчен тухса кайнă тăвантă ывăлĕшĕн тăшмана малалла та тавăрса пынă.

Иван Замысловпа пĕрле гитлеровецсене унăн ывăлĕ—18 çулти Николай тавăрать. Вĕсем иккĕшĕ те алла динамит тытса тăшмана шыраса тупаççĕ, пĕтерсе пыраççĕ.

А. РОЗЕН.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Ильмень кӳллинчен кăнтăртарахра). **Ӳкерчĕк çинче:** пирĕн земляк — зенитнăй оруди наводчикĕ кĕçĕн серкант Ю. Васильев. Унăн орудийĕ темиçе кун хушшинче 5 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ. Часть командованийĕ ăна «За отвагу» медаль парса наградăланă. Вăрçă пуçланиччен Ю. Васильев юлташ Чăваш АССР-ĕнчи Çĕрпӳ чугунçул станцийĕнче рабочи пулса ĕçленĕ.

В. ШАРОВСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ют çĕршывсенче

Рузвельт пресс-конференцире тунă заявлени

ВАШИНГТОН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт пресс-конференцире тухса çапла каланă: эпĕ паян ирхине Эйзенхауэртан Пантеллери утравĕ парăнни çинчен калакан хыпара илтĕм. Итальянецсем, тенĕ Рузвельт, шыв çитменнипе парăннă курăнать. Çапла вара союзниксем вăл утрава сынсем тĕлĕшпе пысăк çухатусем тумасăрах йышăнса илнĕ. Итальянецсем Пантеллери утравне Вăтаçĕр тинĕс Гибралтарĕ тесе шутлатчĕç. Малалла Рузвельт çапла каланă: Итали халăхне тарма вăхăт çитрĕ пулмалла. Италин фашистла руководстви хăйĕн ирсĕр политикине тытса пырса, Итали халăхне çак тĕпсĕр вăрçа кĕртсе янипе чарăнса тăмарĕ, вăл власа пĕр хăй аллинче кăна хăвараçсишĕн тата ют территорисене туртса илессишĕн вăрçса Италие сутса ячĕ.

Фашистла режимăн законсăр тата варвăрла ĕçĕсем, тенĕ Рузвельт, вĕсем Итали халăхĕн ĕçĕсем мар. Çав законсăр тата варвăрла ĕçсене фашистла руководство тунă. Муссолини, тенĕ Рузвельт малалла, Италие никам тĕкĕнмен çĕртенех вăрçă пуçласа ячĕ, апăтăранă Итали халăхне катастрофа умне пырса тăратрĕ. Çав режима пĕтерсе пăкиччен, тĕнĕл державăсен фашистла вăйĕсене çĕмĕрсе тăкса пĕр пăркаланмасăр капитуляци тутаричченех, союзниксем умĕнче пĕр задача кăна тăрать. Çав задача вăл — фашистла вăйсене хирĕç вăйлăн вăрçасси. Анчах та Италире Германи пуç пулса тăни пĕтес вăхăт çитсен тата фашистла режима пĕтерсе лартсан, пĕрлешӳллĕ нацисем Итали халăхне хăйсем лартас тенĕ пек фашистла та мар, нацистла та мар правительство суйласа лартма мел туса парĕç. Çав правительство тин вара Итали халăхне халăхсен çемьисенче унăн хисеплĕ членĕ пулса вырăн йышăнма пулăшĕ. Анчах та çавна ăна нимĕç хуçисене Италирен хăваласа кăларса фашистсен режимне сирпĕнтерсен тин пурнăçлама пулать. Çавăн чухне тин Итали халăхĕн чăн-чăн та татăклă шухăшĕсем уççăнах палăрĕç.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнчи операцисем.—Германипе Франци тапăнни

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: июнĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германин хĕвеланăçĕнчи пайне тапăннă. Пуринчен вăйлăрах Дюссельдорфа тапăннă, ун çине питĕ нумай бомба пăрахнă. Çавăнпа пĕрлех Мюнстера тапăннă.

Çавăн пекех тата Рурпа Рейн облаçĕнчи объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Июнĕн 11-мĕшĕнче кăнтăрла Америкăн 200 бомбардировщикĕ ытла Вильгельмсхафенпа Куксхафен çине бомбăсем пăрахнă.

Июнĕн 11-мĕшĕнче кăнтăрла Англи авиацийĕ Зеебрюггери кокс кăмакисене тата бензол туса кăларакан завода тапăннă.

Çав кунах Çурçĕр Францие Голланди çыранĕсене вĕçсе пырса тапăннă.

Пантеллери утравне йышăнса илнĕ хыççăн Çурçĕр-Хĕвеланăç Африкăри сывлăш-çар вăйĕсен самолечĕсем Лампедуза утравне атакăлаççĕ. Ку утрава атакăласси ĕнер кăнтăрла иртсен пуçланнă та кас пуличченех пынă, вара çĕрĕпех бомбăсем пăрахнă.

Июнĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Реджо ди Калабри аэродромне атакăланă.

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Рур облаçĕн вăтасĕрĕнчи районĕсене тапăннă. Пуринчен вăйлă Бохум хулине атакăланă. Çав операцирен хăйсен базисене 24 бомбардировщик таврăнман. Пушарсем тата взрывсем нумай пулнине палăртнă.

Ĕнер касхине Англи авиацийĕ тăшманăн Канри, Абвильри тата Руан сывăхĕнчи чылай çар объекчĕсене атакăланă.

Июнĕн 13-мĕшĕнче ирхине Америка бомбардировщикĕсен икĕ пысăк соединенийĕ Бременри тата Кильри чылай объекчĕсене атакăланă. Кăнтăрла акăлчансен истребительнăй авиацийĕн самолечĕсем Çурçĕр Францирпе Голландире пысăк операцисем туса ирттернĕ.

Халĕ паллă пулнă тăрăх, Дюссельдорфпа Монстера июнĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тапăнни вăрçă пуçланнăранпа ку таранччен пулса иртнĕ тапăнусенчен чи хаярри пулса тăрать. Аэрофотоӳкерчĕксем кăтартса панă тăрăх, вăл хуласене тапăнни питĕ ăнăçлăх пулса иртнĕ, вĕсем çине 2,000 тонна ытла бомба пăрахнă.

Аэрофотоӳкерчĕсем çавăн пекех тата çакна кăтартса параççĕ: Германире сывлăшран тапăнса тунă ишĕлӳсенчен чи вăйли—пуринчен ытла Дортмунд хули сиен курни пулать. Пĕр майăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тапăннă чухне кăна унта правительствăпа администрации çурчĕсем 880 çурт, машинăсем тăвакан 9 завод тата сахалтан та 1,258 пурăнмалли çурта ишĕлтерсе антарнă е вăйлă сиенленĕ.

ИТАЛЬЯНЕЦСЕН ЛАМПЕДУЗА УТРАВĔ СИНЧИ ГАРНИЗОНĔ ПАРĂННĂ

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕн официальнăй коммюникине пĕлтерет. Коммюникере çапла каланă: «24 сехет хушши чарăнмасăр сывлăшран атакăланă хыççăн тата тинĕсрен пенĕ хыççăн паян Лампедуза утравĕ çинчи гарнизон парăннă. Утрава союзниксен войскисем йышăнса илнĕ.

ПАНТЕЛЕРИ УТРАВĔ ÇИНЧЕ ПУЛНĂ ИТАЛЬЯНЕЦСЕН ГАРНИЗОНĔН ЙЫШĔ

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, итальянецсен Пантеллери утравĕ çинчи гарнизонĕнче пĕр 12—15 пин çын шутланса тăнă.

СОЮЗНИКСЕМ ИТАЛЬЯНЕЦСЕН ЛИНОСА УТРАВНЕ ЙЫШĂНСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, итальянецсен Лампедуза утравне йышăнни хыççăн июнĕн 13-мĕшĕнче ирхине ирех союзниксен пĕр эсминецĕ итальянецсен тепĕр утравĕ—Линоса патне пынă. Эсминец пынă чухне утрав çинче шурă флагсем вĕçсе тăнă. Тăшманăн 140 çынтан тăракан гарнизонĕ парăннă, ăна вара унтан илсе кайнă.

Линоса—Лампедузăран 30 мильăна яхăн çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре выртакан пĕр пĕчĕк утрав. Территори тĕлĕшпе вăл Лампедуза утравĕнчен 5 хут пĕчĕкрех.

АРГЕНТИНĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ ТАВРА

ЛОНДОН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англи правительстви Аргентинăн çĕнĕ правительствине йышăннă.

ВАШИНГТОН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государственный Секретарĕ Хэлл пресс-конференцире çапла каланă: США Аргентинăн çĕнĕ правительствине йышăннă, тенĕ. Хэллран çапла ыйтнă: США çав ĕçе Англи правительствипе килĕшсе тунă-и? тенĕ. Хэлл çакна хирĕç çапла каланă: Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви ку ĕçе хăй пуçарăвĕпех, Америкăри латинла çĕршывсемпе каласса илнĕ хыççăн тунă, тенĕ. Унтан Хэллран тата çапла ыйтнă: ку ĕç вăл США-па Аргентина хушшинчи çыхăнусем улшăннине пĕлтерет-и? тенĕ. Хэлл ку ыйтăва хирĕç çапла каланă: паллах, ун пек ыйтусене правительствăна йышăниччен сӳтсе-явма май пулман, анчах та Пĕрлешӳллĕ Штатсем Аргентинăн çĕнĕ правительстви хăйĕн малалли политики çинчен халăха пĕлтернине шута илнĕ. Хэлл юлашкинчен çапла каланă: Америкăри латинла çĕршывсен пур правительствисем те Аргентина правительствине паян йышăнса эпĕ шанатăп тенĕ.

Японипе Китай вăрçи

Китай командованийĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Китай çарĕсем Чжэцзян провинцин тĕп хулине Цзиньхуана çавăрса илнĕ. Цзиньхуа хули вăл пит те кирлĕ авиабаза пулса тăрать.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Китай çарĕсем Цзиньхуа хулине йышăнса илнĕ те ĕнтĕ (ТАСС, июнĕн 13-мĕшĕ).

НАГЛЯДНĂЙ АГИТАЦИЕ—КОЛХОЗСЕН УЙХИРĔСЕНЕ

Кăçалхи çуракинче наглядлăй агитаци паллă вырăн йышăнса тăчĕ. Илемлĕ плакатсем, боевой лозунгсем, агитокно, фото-витринăсем тата ытти те колхозниксемпе колхозницăсене тухăçлăн ĕçлеме хавхалантарса пычĕç.

Наглядлăй агитацин тĕллевĕ, пирĕн массăллă политикăллă мĕнпур ĕçĕн тĕллевĕ пекех, çакă пулса тăрать: ĕçсыннисене тăван çĕршыва юратма, тăшмана çĕнтерес ĕçшĕн çирĕп те чăтăмлă пулма, мĕнпур вăя хурса ĕçлеме тата тăшмана пĕтĕм чĕререн курайманăр пурăнма вĕрентмелле. Пирĕн ĕçсыннисем геройла Хĕрлĕ Çара пулăшассишĕн халичченхинчен ик-виçĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлетчĕр.

Çураки вăхăтĕнче республикăра наглядлăй агитацин тĕрлĕ формисемпе усă курчĕç. Пуринчен ытларах хаçат витринисем пысăк вырăн йышăнса тăчĕç. Вĕсем урлă агитколлективсем колхозниксене халăхри лару-тăру тата вăрçă ĕçĕсем çинчен пĕлтерсе тăчĕç.

Çуракине хатĕрленнĕ тата ăна ирттернĕ вăхăтра республикăра 1,400 ытла хаçат витрини тунă. Калинино районĕнчи Çавалкассинчи агитколлектив, самахран, 4 витрина тунă. Вĕсем çине кулленех «Известия», «Комсомольская Правда» тата республикăри хаçатсене çыпăçтарса тăнă.

Кăçал чылай районсенче кăтарту хăмисемпе анлăрах усă курма тытăнчĕç. ВКП(б) райкомĕсем район центрĕнче Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене радио тăрăх йышăнса, вăл пĕлтерӳсене ялсоветсемпе колхозсене телефон тăрăх пĕлтерсе тăчĕç. Ку ĕçе ВКП(б) Шупашкар райкомĕ уйрăмах лайăх организацилерĕ. Унта Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, «Юлашки хыпарсен» хăмисем çине те çыпăçтарса тăнă.

Кăтарту хăмисем социализмлă ăмăртăва ертсе пыма пулăшрĕç. Чăнах, вĕсене хăшпĕр колхозсенче анчах курма пулчĕ. Наглядлăй агитацин çак формин витĕмлĕхĕ калама çук пысăк. Красноармейски районри «Большевик» колхозри иккĕмĕш бригадăра (бригадирĕ Романов юлташ) виçĕ плугпа пилĕк кун хушшинче 21 гектар сухаланă. Çак колхозри пĕрремĕш бригадăра (бригадирĕ Никитин юлташ) çавăн чухлĕ вăйпах тата çавăн чухлĕ сукрах 13 гектар кăна сухалама ĕлкĕрнĕ. Çак цифрăсене колхозри кăтарту хăми çине çырнă. Ун хыççăн пĕрремĕш бригадăри колхозниксем тăрăшарах ĕçлеме тытăннă, кĕçех иккĕмĕш бригадăна хуса çитнĕ.

Çавăн пекех куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавсемпе Хĕрлĕ флагсене ăмăртура малта пыракансене пани те производствăллă активлăха хăпартма лайăх майсем туса пачĕ. Элĕк районĕнче сăмахран, чи лайăх колхозсене пама куçса çӳрекен 12 Хĕрлĕ ялав, малта пыракан бригадăсене пама 65 Хĕрлĕ флаг тунă. Çак ялавсемпе флагсене илме тивĕçлĕ пулассишĕн хĕрӳ кĕрешӳ пуçланнă. Мĕншĕн тесен Хĕрлĕ ялавсемпе флагсем лайăх ĕçе палăртнă, фронта вăйлăнрах пулăшас тĕлĕшпе хăш колхоз е бригада тăрăшнине ĕçленине кăтартса панă. Элĕк районĕнчи Тавăт ялсоветĕнче куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава «Новый путь» колхоз членĕсем çуракин пĕрремĕш кунĕсенчех çĕнсе илнĕ. Вĕсемпе ăмăртакан «Комбайн» колхоз членĕсем, Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне сӳтсе-явнă май, вăл ялава туртса илессишĕн çине тăрса кĕрешме тытăннă. Вĕсем ĕçе ирех тухнă, ĕçрен кая юлса кĕнĕ. Тăрăшни усăсăр пулман. Хĕрлĕ ялав часах «Комбайн» колхоз колхозникĕсен аллине куçнă. Вĕсем ăна халĕ те хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ.

Республикăри хăшпĕр колхозсенче фотовитринăсем, монтажсем, выставкăсем ĕçе кайрĕç. Комсомольски районри Тукайри агитколлектив (руководителĕ Камальдинов юлташ) ялсовет канцелярийĕнче фотовитрина тунă. Унта нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен фронтовик-землякĕсен сăнӳкерчĕкĕсене çыпăçтарнă. Витрина варринче çав ял çынни—Совет Союз Геройĕн Геннадий Габайдулин сăнӳкерчĕкне тата ун çинчен çырнă статьясене хаçатсенчен касса илсе çыпăçтарнă. Фотоӳкерчĕк йĕри-тавра—Тукай ялĕнчи фронта кайнă ытти юлташсен сăнӳкерчĕкĕсем.

Улатăр районĕнчи Сталин юлташ ячĕпе тăракан колхозра агитаторсем хаçатсенчен касса илнĕ ӳкерчĕксемпе материалсенчен «Тылра та фронтри пекех ĕçлер», «Отечественнăй вăрçă геройĕсем», «Тăшмана пĕтĕм чĕререн курайми пулма вĕренсе çитмесĕр çĕнтерме çук» темăсемпе монтажсем тунă. Унтах — кăтарту хăми, лозунгсем, плакатсем.

Куславкка районĕнчи Липово колхозĕнчи агитаторсем «Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç туса пыракан отечественнăй аслă вăрçă», «Фронта ытларах тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç, промышленность валли чĕртавар парар» темăсемпе выставкăсем организациленĕ.

Калинино районĕнчи Шĕнерти агитколлектив колхоз 1943 ялхуçалăх çулĕнче илнĕ обязательствăсене кăтартакан лозунгсемпе плакатсенче колхозниксем кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 14-центнер тулă, 15-шер центнер сĕлĕ, 18-шар центнер пăри илме пулнине кăтартса панă. Кунсăр пуçне ăмăрту результачĕсене шута илсе пымалли хăма тунă.

Наглядлăй агитацие анлăнрах туса пырасси çинчен сăмах пуçарсанах парторганизацисен тата агитколлективсен руководителĕсем плакатсемпе лозунгсем çителĕксĕрри çине йăвантараççĕ. Лозунгсемпе плакатсене центртан е республикăран ярса парасса кĕтсе шурăнмалла мар. Вĕсене вырăнтах тумалла. Ку ĕçе пуçарулăн ертсе пыракансем начар мар ĕçсем турĕç.

Октябрьски районра художество ĕçне юратакансем лайăх ĕç пуçарчĕç. Вĕсем хаçатсемпе журналсенчи карикатурăсене пысăклатса ӳкереççĕ те ялти курăнмалли вырăнсене çакса хураççĕ. Районра çавăн пек 5 агитокно тухнă та ĕнтĕ.

Çакă паллах, лайăх шухăшпа, ăна пур çĕрте те анлăн сарас пулать.

Хăшпĕр çĕрте агитаторсем калаçусен вăхăтĕнче географи карттисемпе усă кураççĕ. Ку — каллех питĕ лайăх ĕç.

Çуракинче стена хаçачĕсем пысăк вырăн йышăнчĕç. МТС-сем ĕçлекен колхозсенче тата трактор бригадисенче кăна çураки вăхăтĕнче 2.300 номер ытла стена хаçачĕсем тата 11.600 боевой листок кăларнă. Хăшпĕр агитколлективсем сатирăллă стена хаçачĕсем кăларма тытăнчĕç. Сивчĕ сăвăсемпе карикатурăпа, критикăллă статьясемпе вĕсем колхозри çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăларчĕç, колхозниксене çав çитменлĕхсене пĕтерме мобилизацилесе пычĕç.

Октябрьски районри «Туйташ» колхозра кивĕ йăлапа çуртырписене алăпа акма пуçланă. Колхозра тухакан «Колхоз капкăнĕ» ятлă стена хаçачĕ (редакторĕ А. Степанов юлташ) агротехникăна пăсакансене тăшкĕрсе критикăллă сăвă пичетленĕ. Колхозниксем тепĕр кунхех сеялкăсемпе акма тытăннă.

Çураки вăхăтĕнче республикăри парти организацийĕсем наглядлăй агитаци тăвас тĕлĕшпе чылай опыт пухрĕç. Çак опыта тĕпчесе вĕренмелле, унпа уборкăна хатĕрленес тата тырпулсене пухса кĕртес ĕçсенче анлăн усă курас пулать.

Кашни колхозника, МТС-семпе совхозсен работникне çакăн çинчен ăнлантарса памалла: кăçалхи уборка ĕçĕсене кĕске вăхăтра тата ăнăçлăн ирттерни, тырпулсене пĕр тăкаксăр пухса кĕртсе, государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене вăхăтра пурнăçлани — пирĕн çĕнтерĕве çывхартать. Ялти мĕнпур агитаторсен умĕнче халĕ çак задачăран ответлăрах та кирлĕрех задача урăх çук. Ку ĕçре вĕсен наглядлăй агитаципе сарлакан усă курас пулать.

С. МАКАРОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноспа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—9—23.